24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
ФЕВРАЛЬ
4
ЮНКУН
29(6054) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔН, ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕТĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕТĔН ХАÇАЧĔ.

Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне çуракине хатĕрленсе çитер

Çак кунсенче эпир Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем республикăри мĕнпур колхозникĕсене, колхозницăсене тата ялхуçалăх специалисчĕсене чĕнсе каланине пичетлесе кăлартăмăр. Кольцовка колхозникĕсем чĕнсе каланине ырласа, ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ постановленийĕ йышăнчĕ, вăл «ВКП(б) райкомĕсене тата райсоветсен исполкомĕсене Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсемпе колхозницисен чĕнĕвне пур колхозсенче те анлăн сӳтсе-явас ĕçе организацилеме, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине çуракине хатĕрленес ĕçе вĕçленипе кĕтсе илес тĕлĕшпе колхозсем, бригадăсем тата звеносем хушшинче ăмăрту организацилеме» хушрĕ.

Ленин орденлĕ колхоз колхозникĕсем кăçал нихăçанхи пек мар тухăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешӳ пуçарса ячĕç. Вĕсем кăçалхи çуракине большевикла кĕтсе илме хĕрӳллĕн хатĕрленсе пыраççĕ. Ĕçе пĕлсе организацилени, ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухни вĕсене пур ĕçе те вăхăтра тата тĕплĕн туса пыма пулăшать. Ĕç вăйĕ çитмест, вăл çитмест, ку çитмест, тесе лараканcем кунта çук. Çитмест пулсан, çитерес пулать,—çакăн пек вĕсен ĕçĕнчи çирĕп йĕрке, çавăн пек хуçать вăрçă обстановки.

Кольцовка колхозникĕсем вăрлăх хатĕрлес ĕçе пысăк вырăна хураççĕ. Вĕсем кăçалхи çураки валли вăрлăхсене иртнĕ кĕркуннех хатĕрлеме тытăннă. Халĕ вĕсем вăрлăхсене пур культурăсем тăрăх та хатĕрлесе çитернĕ, вĕсене сортласа хунă, лайăх сыхласа усрас тата вĕсене тӳхесе тасатмалли материалсене хатĕрлес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Вĕсем пек ĕçлекен колхозсем республикăра сахал мар. Советски районри «1-ое мая», «Коминтерн», «Крестьянская газета» тата ытти колхозсем те мĕнпур культурăсен вăрлăхĕсене хатĕрлесе хунă, халĕ вăрлăха триер витĕр кăларса тасатас енĕпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Çав вăхăтрах ку енĕпе начар ĕçлекен колхозсем те нумай-ха. Сăмахран, Советски районри «Смычка» (председателĕ Семякин юлташ), «Ударник» (председателĕ Державин юлташ), «Пучах» (председателĕ Семенов юлташ) колхозсем ку таранах çитсе те пĕр пĕрчĕ вăрлăх та хывса хатĕрлемен.

Хăйсен çырăвĕнче Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем машинăсемпе инвентарьсене тата ут таврашĕсене юсаса хатĕрлес ĕç çине уйрăмăнах вăйлăн çавăрăнса пăхма чĕнеççĕ. Вĕсем ку тĕлĕшпе те пысăк ĕç тунă, халĕ те туса пыраççĕ. Çаплах ĕçлеççĕ малта пыракан ытти колхозсем те. Сĕнтĕр районĕнчи «Победа» колхозра ун пек мар вара. Кунта ут таврашĕсене тирпейлĕ тыткалама тăрăшмаççĕ. Хăмăтсем, йĕвенсемпе пăявсем кунта ним йĕркесĕр йăванса выртаççĕ. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ытти ĕçсене те çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Кăçалхи çураки вăхăтĕнче лаша пысăк вырăн йышăнмалла, çавăнпа лашасене ака ĕçне тума хатĕрлес енĕпе пирĕн тăрăшса ĕçлес пулать. «Кăçалхи çуракинче кашни лашапах пĕлтĕрхинчен чылай нумайрах ĕçлемелле пулать, лашасем хĕлле те яланах ĕçре пулаççĕ. Анчах лашана лайăх пăхсан тата унпа йĕркеллĕ ĕçлесен, вăл начарланмасть. Ана вăхăтра тăрантарас, шăварас пулать, вăхăтра тасатас пулать тата яланах чăн-чăн хуçа пек пăхса усрас пулать»,—теççĕ Кольцовка колхозникĕсем. Çакна вара хăшпĕр колхозсенче ăнланмаççĕ. Элĕк районĕнчи Хирлепри колхозра декабрь уйăхĕнче пĕр лаша вилнĕ. Какаçри тата Актайри колхозсенче пĕрер лаша витеренех çухалнă, вăл лашасене халĕ те тупаймаççĕ. Çак колхозсен председателĕсем Хомурова, Сергеев, Соловьев юлташсем хăйсен хуçалăхĕнче тивĕçлĕ йĕркелĕх туса хурас, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Çураки кунран кунах çывхарса килет. Кашни кунпа, кашни сехетпе пĕлсе усă курса, çурхи ĕçсене ăнăçлăн туса ирттерме большевикла хатĕрленес пулать. Вăрлăхсем хатĕрлемелле, колхозсем хушшинче пĕр-пĕрне вăрлăх парса пулăшас ĕçе организацилемелле, машинăсене, инвентарьсене, ут таврашĕсене юсаса хумалла, вырăнти удобренисене хатĕрлемелле. Çурхи ĕçсен планне туса кашни колхозник вăл вăхăтра мĕн тумаллине палăртса хумалла. Çапла тума чĕнеççĕ Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз колхозникĕсем.

«Атьăр-ха, юлташсем, тылра татах та лайăхрах, хăвăртрах ĕçлер,—тесе çыраççĕ вĕсем,—пирĕн тăван тата паттăр Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине 1942 çулти çуракине пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илер!»

Çакăн пек задача лартас пулать кашни колхозăн хăйĕн умне. Кольцовка колхозĕнчи колхозниксен чĕнĕвне кашни бригадăра, кашни звенора сӳтсе-явса конкретнăй мерăсем палăртса хурас пулать, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла.

Ишлей районĕнче Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсен çырăвне сӳтсе явма колхоз председателĕсен канашлăвне тунă. Шупашкар районĕнчи колхозсенче ĕнер çак çырăва сӳтсе явма тытăннă. Паллах, ытти районсенчи колхозсем те çитес çывăх кунсенчех ăна сӳтсе-явса тивĕçлĕ решенисем йышăнĕç, çуракине хатĕрленес ĕçе темиçе хут вăйлатĕç.

СССР, Великобритани тата Иран хушшинчи союз çинчен договор тунă ятпа И. В. Сталинпа М. А. Форуги пĕр-пĕрин патне телеграммăсем янă

СССР, Великобритани тата Иран хушшинчи союз çинчен тунă договора алă пусса çирĕплетнĕ ятпа СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин тата Иранри Министрсен Совечĕн Председателĕ М. А. Форуги пĕр-пĕрин патне çакăн пек саламлă телеграммăсем янă:

Иранри Министрсен Совечĕн Председательне М. А. ФОРУГИ господина. Тегеран.

СССР, Великобритани тата Иран хушшинчи союз çинчен тунă договора алă пусса çирĕплетнĕ ятпа Сире, г-н Председатель, тата сирĕн урлă Иран правительствине чĕререн ырă сунса саламлатăп. Пирĕн çĕршывсем хушшинчи çĕнĕ, союзлă отношенисем Иран халăхĕпе Совет Союзĕн халăхĕсем хушшинчи çыхăнусене татах та çирĕплетессине, пирĕн çĕршывсен интересĕсене кура вĕсем татах та ăнăçлăн аталанса пырассине çирĕппĕн шанса тăратăп.

И. СТАЛИН.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ.
Мускав, Кремль.
1942 çулти февралĕн 2-мĕш.

Унăн превосходительствине СТАЛИН господина. Мускав.

СССР, Великобритани тата Иран хушшинче тунă союзлă договора алă пусса çирĕплетнĕ ятпа Сирĕн превосходительствăна питĕ ăшшăн, чĕререн кăмăллăнине каласа пама ирĕк парăр. Çак договор пирĕн çĕршывсем хушшинчи туслă çыхăнăва, пĕр-пĕрне ăнланассине çирĕплетсе пырĕ тесе тата пĕр-пĕрин интересĕсене хисеплени çинче никĕсленсе тăракан пĕрлĕхлĕ ĕçрен Иран, çавнашкалах ССР Союзĕ те усă курма пултарĕ тесе эпĕ ĕненсе тăратăп.

Министрсен Совечĕн Председателĕ М. А. ФОРУГИ».

Хĕрлĕ Çар боецĕсене пулăшаççĕ

ИШЛЕЙ. Тăрăн туллимар вăтам шкулĕнчи учителĕсем В. М. Молотов юлташ, Германи влаçĕсем хăйсем тытса илнĕ совет территорийĕ çинче пур çĕрте те халăха çаратса юхăнтарни çинчен тата тискер кайăкла хăрушă ĕçсем туни çинчен пĕлтерсе, ССР Союзĕпе дипломатиллĕ çыхăнура тăракан çĕршывсен посолĕсемпе посланникĕсем патне янă нотăна ăнлантарса парас майпа ялсоветĕнчи ĕççыннисем хушшинче докладсем туса ирттерчĕç. В. М. Молотов юлташăн нотинче кăтартса панă фактсем—нимĕç фашисчĕсен тискер кайăкла хăрушă ĕçĕсем ĕççыннисен чĕринче хаяр тарăхупа çилĕллĕ курайманлăх çуратрĕç.

Ялсоветĕнчи ĕççыннисем фашистла çĕлен-калтасене хăвăртрах çапса çĕмĕрсе çĕршывран шăлса ывăтма Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсене кулленех тата вăйлăнрах пулăшса пыма пулчĕç. Январĕн 24-мĕш тĕлне вĕсем Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли çĕнĕрен 110 тир, 3 мăшăр çăматă, 8 килограмм ăхăн çăм, 11 çĕлĕк, 12 мăшăр перчатка, 6 мăшăр носки, ваткăллă 4 шалавар, 4 мăшăр кĕпе-йĕм пухса районри склада леçсе пачĕç. Ăшă япаласем пухас ĕç сарăлсах пырать. Кашни колхозник хăйĕн ĕçне кулленех лайăхрах туса пынипе Хĕрлĕ Çар боецĕсене пулăшма тăрăшать.

Я. ВАСИЛЬЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 2-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 2-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, фронтăн нумай участокĕсенче нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса, малалла наступлени туса пынă. Фронтăн хăшпĕр участокĕсенче гитлеровецсем контратакăсем тунă, анчах çав контратакăсене сирсе пăрахнă. Противник техника тĕлĕшпе, уйрăмăнах чĕрĕ вăй тĕлĕшпе, пысăк çухатусем тӳснĕ. Темиçе кун каярах пирĕн войскăсем Феодосия хулинчен тухса кайнă.

Февралĕн 1-мĕшĕнче нимĕçсен 11 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 3 самолет пĕтнĕ.

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕ çинче противникăн 3 транспортне путарнă, çав транспортсен водоизмещенийĕ пурĕ пĕрле 8800 тонна шутланать.

* * *

Февралĕн 1-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 6 танкне, пехота тата грузсем турттарса пыракан 170 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 35 лавне, 22 орудине прислугисемпе пĕрле, зенитнăй пулеметсен 9 точкине, 3 минометне, горючи тултарнă автоцистернине пĕтерсе тăкнă тата противник пехотине икĕ батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Иртнĕ эрнере, январĕн 25-мĕшпе 31-мĕш кунĕсем хушшинче, нимĕçсен авиацийĕ 160 самолет çухатнă. Вĕсенчен сывлăшри çапăçусенче 58 самолет, зенитнăй тупăсенчен персе 17 самолет, противникăн аэродромĕсем çинче 85 самолет пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 39 самолет пĕтнĕ.

* * *

Наумов полковник командир пулса ертсе пыракан чаçăн боецĕсем (Хĕвеланăç фрончĕ) февралĕн 1-мĕшĕнче противника халăх пурăнакан П. пунктĕнчен хăваласа кăларнă. Нимĕçсем, çапăçу хирĕнче хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 300 ытла виллине пăрахса хăварса, тарнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе ярса, малалла куçнă, противникăн 6 орудине, 23 минометне, 14 пулеметне тата 112 винтовкине тытса илнĕ.

* * *

Пирĕн авиаци чаçĕ, Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, К. районĕнче тăшманăн аэродромĕ çине сывлăшран ăнăçлăн пырса тапăнса, нимĕçсен «Юнкерс—52» йышши 5 транспортнăй самолетне тата бензин тултарнă пĕр цистернине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть пĕр кун хушшинче нимĕçсене халăх пурăнакан темиçе пунктран хăваласа кăларнă, 11 оруди, 21 пулемет, 13 миномет, 3 автомашина тытса илнĕ тата нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 1170 çынни вилнĕ. Тепĕр участокра пирĕн кавалерин чаçĕсем тăшманăн пехотине пĕр полк çурăна яхăн пĕтерсе тăкнă тата трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Бажанов связист противник пулеметсемпе минометсенчен персе тăнă вăхăтра çыхăну линине тӳрлетсе тăнă. Çапăçăвăн ĕçе татса памалли вăхăчĕ килсе çитсен, вăл пехотăпа пĕрле атакăна кайнă та, штыкпа тăрса çапăçса, тăватă фашиста вĕлернĕ.

* * *

Харьков облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Р. юлташ ертсе пыракан отрячĕ, икĕ уйăх хушши çапăçса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла вĕлернĕ тата противникăн тĕрлĕ хĕçпăшалне нумай пĕтерсе тăкнă. Малалла çав отряд командирĕн дневникĕнчен уйрăм вырăнсене илсе пичетлетпĕр:

«**Ноябрĕн 28-мĕш.** Нимĕçсен карательнăй отрячĕ тăнă С. ялĕ çине пырса тапăнтăмăр. Хире-хирĕç персе тăнă вăхăтра гитлеровецсен 13 салтакне стройран кăлартăмăр, трофейăсем тытса илтĕмĕр.

Ноябрĕн 29-мĕш. Нимĕçсене Г. ялĕнче атакăларăмăр. Фашистсем çуртсенче пулнă, çав çуртсем çине эпир граната сем ывăтрăмăр. 70 фашиста вĕлерттĕмĕр.

Декабрĕн 7-мĕш. Пирĕннисем В. ялне çĕмĕрсе кĕнĕ те 10 нимĕçе вĕлерсе тухнă, вăл шутра пĕр офицер пулнă.

Декабрĕн 17-мĕш. У. ялĕнче пирĕн отряд противникăн 40 çынлă ушкăнне хирĕç çапăçнă. Эпĕ хам офицера тата ефрейтора персе вĕлертĕм. Нимĕçсем пысăк çухату тӳсрĕç.

Декабрĕн 27-мĕш. Нимĕçсене П. ялĕнчен хăваласа кăлартăмăр, миномет, 2 ещĕк снаряд тата 20 мина тытса илтĕмĕр. Çав минометран тарăкан нимĕçсем çине петĕмĕр».

* * *

Нимĕçсен 106-мĕш пехотнăй дивизийĕн 239-мĕш полкĕн 6-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ фельдфебель Вилли Миллер çапла каласа панă: «6-мĕш ротăра 175 салтакран стройра 57 салтак çеç тăрса юлчĕ. Дивизири çынсем питĕ начарланса кайнă, çавна пула пирĕн артполкăн каялла чакнă чухне орудисене пăрахса хăварма тивнĕ».

* * *

Вилнĕ нимĕç салтакĕ Людвиг çумĕнче çакăн пек çыру тупнă: «Хаклă ывăлăмăр. Эпир сан патна час-часах çыратпăр, анчах та санран ответ илейместпĕр. Çыру кунта çитеймест е «çухалса каять», пирĕннисем çавтери пысăк çухатусем тӳсни çинчен пире пĕлтерес мар тесе ĕнтĕ вăл... Российăна хирĕç вăрçни пирĕншĕн пысăк инкек пулса тăчĕ. Пире çав вăрçа нацистсем турттса кĕртрĕç. Халăх пĕр сăмах та калама пултараймасть. Вăл суккăрланнă. Анчах та хăрушăн вăранса каймалли сехет çитĕ, вăл хăçан та пулсан çитмеллех. Эпĕ сана тепĕр хут канаш паратăп: кирек мĕнле майпа та пулин тата ăçта май килнĕ çавăнта фронтран шăвăн. Сан хыççăн хăвăн юлташусем те çавăн пекех тăвĕç».

* * *

Харьков облаçĕн Печенежски районĕнчи Комсомольск ялне тытса илсен, нимĕçсем унти мĕнпур халăха çуртсенчен урама хăваласа кăларнă, хресченсенчен мĕнпур выльăх-чĕрлĕхне, мĕнпур продовольствине тата пĕтĕм пурлăхне туртса илнĕ. Кам та кам çапла çаратнине хирĕç çăвар уçса сăмах калама хăйнă, çавсене пурне те нимĕçсем пере-пере вĕлернĕ е хĕнесе пĕтернĕ. Персе вĕлернисем хушшинче çаксем пур: Яков Демьянович Ноженко, Андрей Демьянович Ноженко, Николай Степанович Галич, Василий Егорович Кобзов, Галина Игнатьевна Корниенко, Яков Захарович Галич тата Марта Андреевна Батюк. Гитлерла вăрă-хурахсем пĕр урамра тăватă пĕчĕк ачана, 2 çултан пуçласа 4 çула çитиччен-хи ачасене, ярса тытнă та пĕр çуртăн подвалне хупса питĕрсе лартнă, унтан çав çурта çунакан шĕвек сапса вут тивертсе янă. Ачасем çунса кайнă. Пĕр хресчен хĕрарăмне фашистсем çунакан çурта пăрахнă. Совет чаçĕсем пыра-пыра çапнипе Комсомольск ялĕнчен каялла чакнă чухне нимĕçсем 150 киле вут тивертсе çунтарса янă.

Февралĕн 3-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Пирĕн чаçсем нимĕçсен Сухиничи хулинчен тухса тарнă 208-мĕшпе 216-мĕш пехотнăй дивизисен аркатса тăкнă полкĕсен юлашкийĕсене хăваласа пырса, пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна яхăн стройран кăларнă, противникăн танкне, танксене хирĕç пемелли орудине, выльăх апачĕпе боеприпассем турттарса пыракан 100 лавне пĕтерсе тăкнă тата 5 оруди, 4 пулемет, 4 автомашина, миномет тытса илнĕ. Хĕвеланăç фрончĕн тепĕр участокĕнче пирĕн стрелковăй часть, противникăн вăйлатнă батальонне Я. пунктĕнчен çапса кăларса, нимĕçсенне юсавлă 2 танк тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн часть темиçе кун хушшинче противникăнне 7 оруди, 5 станковăй пулемет, 11 ручной пулемет, 1 танк, 12 автомат тытса илнĕ. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Калинин фронтĕнчи авиачаçсенчен пĕринчи летчик-гвардеецсем Зайцевпа Мещеряков капитансем нимĕçсен икĕ истребителĕ сыхласа пыракан бомбардировщикĕсен ушкăнне атакăланă. Çапăçура пирĕн гвардеецсем кашниех тăшманăнне икшер самолет персе антарнă. Тăшманăн ытти машинисем каялла çавăрăнса тарнă.

* * *

Майор Садчиков ертсе пыракан красноармеецсен группи, А. ялĕ çине çĕрле хăюллăн пырса тапăнса, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 60 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен миномет расчетне тата шултăра калибрлă пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Красноармеец Потяпин юлташ нимĕçсен чаçĕн штабĕ патне систермесĕр шăвăнса пынă та, пĕлсе çапăçса, тăшманăн 14 салтакĕпе 2 офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизанла отрядсенчен пĕринчи партизан-пулеметчик Б. юлташ, гитлерла бандитсене хирĕç çапăçса, 8 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен вилнĕ ефрейторĕ Иоганс Фунс çумĕнче вăл хăйĕн тăванĕсем патне çырнă çырăва тупнă. Çырура вăл çапла ӳпкелешет: «Пирĕн кунта мĕнмĕн чăтма тивнине пурне те каласа та пĕтерес çук. Тен, эсир çаксем пурте чăн мар тесе шухăшлатăр пулĕ. Анчах мана ĕненĕр ĕнтĕ: пирĕн салтаксем кунта халĕ сивĕпе шăна-шăна хытаççĕ. Вĕсем çавтери ырханланса салхуланса кайнă, таса мар çӳреççĕ, пыйтланса пĕтнĕ. Пурте хăйсем çине вырăнти халăхран туртса илнĕ кĕпе-тумтирсем чăркаса тултарнă».

* * *

Нимĕçсен вилнĕ салтакĕ Гейнц çумĕнче арăмĕнчен илнĕ çырăва тупнă. Çырура çапла каланă: «1942 çулта эпир лайăхрах хĕçпăшалланăпăр тата вăрçа ăнăçлăн туса пыма пултарăпăр, тесе каларĕ фюрер. Çакăн хыççăн хĕрарăмсем пурте сасартăках пуçĕсене усрĕç. Эпир вăрçă 1941 çулта вĕçленет тесе шанса кĕтсе тăнăччĕ вĕт. Эпĕ ĕçлекен фабрикăри работницăсем шалтах халран кайрĕç. Пурте салхуллă çӳреççĕ. Тăванĕсенчен фронтра никам та çук хĕрарăмсем тата ухмахсем çеç хавасланса çӳреççĕ...»

* * *

Югослави партизанĕсем Германипе Итали оккупанчĕсене питех те вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. Виçĕ кун хушши çапăçса, партизансем Полянски айлăма гитлеровецсенчен тасатнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ. Сашук-Загреб чугунçулĕ çинче çар поездне тӳнтерсе янă. Нимĕçсем валли ĕçлесе тăракан химзаводне взрыв туса сирпĕнтернĕ.

* * *

Отечественнăй аслă вăрçăн кунĕсенче Молотов облаçĕнчи предприятисенче фронта кайнă арçынсем вырăнне 7.000 хĕр ĕçе тăнă. Вĕсем пурте производствăн тĕрлĕ специальноçĕсене ăнăçлăн вĕренсе пыраççĕ.

СССР, Великобритани тата Иран хушшинчи союз çинчен договор тунă май

Договора алă пусса çирĕплетнĕ ятпа Тегеранра йышăну пулнă

ТЕГЕРАН, январĕн 31-мĕш. (ТАСС). СССР, Великобритани тата Иран хушшинче союзлă договор тунă ятпа кунта йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура Иранăн премьер-министрĕ, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ тата Иран правительствин пур членĕсем те, ССР посолĕ, Великобританин посланникĕ тата ыттисем те пулнă.

Иранăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ г. Сохейли сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл СССР, Великобритани тата Иран хушшинче союзлă договор тунине питĕ кăмăлланине каласа панă. Тĕнчене вăрçă хупăрласа илнĕ тата çав вăрçăн çулăмĕ сарăлнăçемĕн сарăлса пынă вăхăтра çак договора туни çав çулăма хирĕç чи паллă чăрмав туса хуни пулса тăрать ĕнтĕ, тенĕ вăл. Паллах, договор ĕлĕк пĕр-пĕрне ăнланманнисене пĕтерсе хурĕ. Г-н Сохейли çак договор çумне экономика тĕлĕшпе тата ытти ыйтусем тĕлĕшпе тунă урăх договорсем хушăнассине, союзниксем хушшинчи туслăх никĕсĕсем çирĕппĕн сыхланса пырассине шанса тăни çинчен каланă. Çавăн пекех тата министр Ирана аталантарас тĕлĕшпе союзниксем пур майсемпе те пулăшса пырассине шанса тăни çинчен те каласа панă, ССР Союзĕпе Великобритани представителĕсене союзлă договор тăвас тĕлĕшпе вăй хурса ĕçленĕшĕн тав тунă.

Демократиллĕ çĕршывсен гитлеризма хирĕç пыракан кĕрешĕвĕнче, Ирана сыхласа хăварас ĕçре çак договор питех те пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртнă ССР посолĕ Смирнов юлташ.

Великобритани посланникĕ г. Буллард хăйĕн сăмахĕнче союзниксем тăшмана çĕнтерессине шантарса каланă тата Иранăн никама пăхăнманлăхĕпе тĕрĕс-тĕкеллĕхне хӳтĕлесе хăварас тĕлĕшпе союзлă договор мĕнтери пысăк вырăн йышăнса тăнине уйрăмах палăртнă.

Иранăн премьер-министрĕ г. Форуги договора пичетлесе кăларни ыйтăва уçăмлăн ăнлантарса панине палăртса, ăна чĕререн пурнăçа кĕртсе пыни Иранăн хăрушсăрлăхне татах та ытларах çирĕплетессине шантарса каланă. Г. Форуги ССР Союзĕпе Великобританин представителĕсене, хăйсен правительствисен шухăш-кăмăлĕсене уçăмлăн та тĕрĕс каласа панăшăн тав туса, хальхи вăрçа союзниксемпĕн ăнăçлă вĕçлеме ырă суннă.

Профсоюз членĕсемпе çамрăксен кросĕ

ÇЕМĔРЛЕ. (Телефон тăрăх). Районри ĕççыннисем комсомолецсемпе çамрăксен тата профсоюз членĕсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пыракан кросне активлăн хутшăнаççĕ. Пĕрремĕш кун кросра 522 çын пулнă. Вĕсенчен 459 çын ГТО значокĕн хĕллехи нормине панă. Малтанхи кун древкомбинатра, мехлесопунктра ĕçлекенсем тата шкулсенче вĕренекенсем кроса ытларах хутшăнчĕç. Мăн Улхашри вăтам шкулта вĕренекенсем кроса начар мар хатĕрленнине кăтартса пачĕç. Çав кун унта 43 ача ГТО значокĕн нормине панă. Пуринчен лайăх результатсем хулари шкулта вĕренекенсем кăтартрĕç. 10 километрлă дистанцие Семенов 49 минута та 50 секундăра, Кадеров—50 минутăра тухрĕç.

Х. ЛИСИН.

* * *

ВĂРНАР. Малтанхи кун кросра районĕпе 604 çын пулнă. Вăрнар поселокĕнчен кăна 348 çын тухнă. Вăл шутра—182 комсомолец. Çамрăксем йĕлтĕрпе çӳрес тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Леспромхозра ĕçлекен П. Иванова 5 километра 20 минутăра, А. Новиков 10 километра 50 минутăра тухрĕç.

Çавăн пекех кросăн малтанхи кунĕ Мамалайри Ворошилов ячĕпе, Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче аван иртнĕ.

Ĕнер кросс Иртеменккассинче пулчĕ. Унта пуçламĕш шкулта вĕренекенсем 12 çын хутшăнчĕç. Вĕсенчен 10-шĕ БГТО значокĕн нормине пачĕç. 3-мĕш класра вĕренекенсем: Георгий Матвеев—3 километра 18 минутăра тухас вырăнне 13 минутăра, Давид Максимов—14 минутăра, Антонина Алексеева 5 километра 18 минутăра тухрĕç.

Февралĕн 8-мĕшĕнче йĕлтĕрçĕсен районри ăмăртăвĕ пулса иртет. Унта кашни ялтанах пуçтарăнаççĕ.

В. МАКСИМОВ.

* * *

Ишлей районĕнче кросс 4 кустра пулса иртнĕ. Пурĕ 213 çын хутшăннă. Вăл шутра 163 комсомолец пулнă. 192 çын ГТО значокĕн нормине панă. Райцентрти учрежденисенче ĕçлекенсем кроса организованно тухнă. Комсомолецсем Н. Милютин юлташ 10 километрлă дистанцие пĕр сехетре, К. Эльвира юлташ 3 километра 18 минута та 58 секундăра тухнă.

* * *

Первомайски районра кроса 284 çын тухнă. Вăл шутра 107 комсомолец. 246 çын ГТО значокĕн нормине панă.

Çĕршывăн финансĕсене ӳстерме

ШАМĂРША. Районри нумай колхозсем 1942 çулти культсбор укçине срокчен тӳлесе татма тăрăшаççĕ. Ку ĕç халĕ вăйлансах пырать. Ялсовечĕсем çумĕнчи финагентсем хăйсен ĕçĕсене тĕпренех урăхлатса çĕнетрĕç.

«Пламя труда» колхозра çак кунсенче колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта вĕсем пурте пĕр кăмăллăн государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене срокчен тӳлесе татма пулчĕç.

1942 çулти культсбор укçине январĕн 18-мĕш тĕлне 13.500 тенкĕ пухнă та ĕнтĕ. Чи малтан культсбор укçине Ф. Архипов колхозник тӳлесе татрĕ.

— Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар аслă полководец Сталин юлташ ертсе пынипе тăшмана хирĕç хаярран çапăçать, эпир гитлерла захватчиксене пуçĕпех пĕтерсе тăкăпăр. Анчах та çавна тума пирĕн хамăрăн Хĕрлĕ Çара пулăшассине татах та вăйлатмалла. Колхоз производствинче пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле тата государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене срокчен тӳлесе татмалла,—терĕ Архипов юлташ.

Унтан пример илсе М. Лукьянов, Н. Петухов колхозниксем те культсбор укçине пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç.

«Мотор» ялхуçалăх артелĕн членĕсем те 1942 çулти культсбор укçине çитес кунсенчех тӳлесе татма пулчĕç. В. Кузьмин, Д. Горбунов, Н. Кузьмин тата В. Платонов колхозниксем извещени илнĕ кунах хăйсен парăмĕсене татрĕç.

Çавăн пекех «Юлташ» колхозри К. Хайретдинов, Н. Кузьмин, Г. Хасьянов колхозниксем 1942 çулти укçа-тенкĕ парăмĕсене январĕн 15-мĕш тĕлнех тӳлесе татрĕç.

Сталин ячĕпе тăракан колхозра январĕн 15-мĕш тĕлне 60 колхозник культсбор укçине тӳлесе татнă.

1942 çулти культсбор укçине тата укçа-тенкĕ парăмĕсене срокчен тӳлесе татассишĕн районри пур колхозсенче те социализмлă ăмăрту пуçланса кайрĕ.

Ф. КРАСНОВ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче

295-мӗш дивизие пырса ҫапни

Ҫӗр ӑшне чавса шала кӗрсе ларнӑ противник высотасем ҫинче ҫирӗплетнӗ рубеж тунӑ. Унта блиндажсемпе ДЗОТ-сем туса хунӑ. Оборона линийӗ патне пымалли вырӑнсене тӑшман минӑсем нумай лартса тухнӑ, йӗплӗ пралуксем карса пӑтраштарса пӗтернӗ.

Шартлама сивӗ ир. Уйхирсене тӗтре хупласа илнӗ, высотана, вӑрман хӗррине, ҫулсене тӗтреллӗ чаршавпа хупӑрласа пытарнӑ. Темиҫе метрта та ҫын кӗлеткине уйӑрса илме йывӑр.

Пирӗн чаҫсем наступлени пуҫласа янӑ. Оккупантсене, хӑйсем кӗтнӗ пек, фронтран мар, флангран атакӑланӑ. Н-ски часть, тӑшман оборонинчи вӑйсӑртарах вырӑна шыраса тупса, Ҫурҫӗр Донец юханшыв урлӑ каҫнӑ та противникӑн тылне ҫӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ. Подразделенисем тӑшманӑн хирӗҫ тӑмалли вырӑнӗсене противник оборони ӑшӗнче шалта пӗтере-пӗтере тӑкнӑ, противникӑн боевой йӗркисене аркатса пынӑ.

Пирӗннисем тӑшманӑн оборона линине татса кӗнине пула противник шанчӑка ҫухатса, шикленсе ӳкнӗ. Нимӗҫ, капкӑна ҫакланнӑ кашкӑр пекех, тапаланма тытӑннӑ. Нимӗҫсен 295-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи ҫӗршер салтакӗсемпе офицерӗсем, «ҫӑлӑнӑҫ зонине» шыраса, ҫывӑхри типвара тарса пухӑннӑ, анчах хӗрлӗ воинсен хӗҫпӑшалӗ вӗсене кунта та пырса тивнӗ. Свиицов юлташ комиссар пулса тӑракан артиллеристсен подразделенийӗ фашистсен «ҫӑлӑнӑҫ зони» ҫине артиллерирен вӑйлӑ вучӗпе тапӑннӑ та «ҫӑлӑнӑҫ зонинчен» вилӗм типварӗ туса хунӑ. Ҫак тамӑкран ҫӑлӑнса тухма пултарнисем питӗ сахал пулнӑ.

Ирӗке кӑларнӑ ялсенчи ҫынсем фашистсен тискерлӗхӗсем ҫинчен каласа параҫҫӗ. Г. ялӗнче оккупантсем инвалидсене те, старриксемпе ача-пӑчасене те хӗрхенмесӗрех пур ӑшӑ япаласене те илсе тухса кайнӑ, колхозник Коржов юлташа ҫаратнӑ хыҫҫӑн фашистсем ӑна персе пӑрахнӑ. Ҫак ялти нимӗнпе те айӑпа кӗмен Андрей Бабенко, Байкопа унӑн 16 ҫулти ывӑлӗ, Черновский хресченсем те ҫавӑн пек вилӗмпех вилнӗ.

Лоскутовка ялӗнчи колхозниксем: нимӗҫсем хӑйсен аманнӑ салтакӗсемпе офицерӗсене юн яма хресчен ачисенчен юн илнӗ те хӑйсене пере-пере пӑрахнӑ, тесе каласа параҫҫӗ.

Пирӗн чаҫсен боецӗсем, тӑшман темӗн пекех хаяррӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, малалла куҫса пыраҫҫӗ. Пирӗн чаҫсем пыра-пыра ҫапни Гитлер салтакӗсене ӑс кӗртсе пырать.

Нимӗҫсен 518-мӗш пехотнӑй полкӗнчи 3-мӗш батальонӑн 12-мӗш ротинчи ефрейтор Поляк, фронт урлӑ хӑй ирӗкӗпех каҫса, тыткӑна парӑннӑ. Вӑл ҫапла каласа парать: «Салтаксенчен нумайӗшӗсем вӑрҫасшӑн мар. Ҫавӑнпа та 295-мӗш пехотнӑй дивизин чаҫӗсенчен салтаксем тарма пуҫланӑ. Отто Виши салтак граждӑнла тумтир тумланса Германие тарма хӑтланса пӑхнӑ, анчах та ӑна тытнӑ та военно-полевой суд аллине панӑ. Суд йышӑннӑ тӑрӑх, ӑна чи малти позицисене янӑ. Кунта вӑл хӑйне хӑй вӗлерме хӑтланса пӑхнӑ. Пирӗн ротӑра 35 ҫынна яхӑн аллисене е урисене тӑм илнипе асапланаҫҫӗ. Анчах та вӗсене госпитальсене ӑсатмаҫҫӗ. Пирӗн мӗншӗн вилме тивнине эпир хамӑр та пӗлместпӗр. Пирӗн асапсем хӑҫан пӗтессине пӗлместпӗр. Пире вӑрҫӑ вӗҫленесси ҫинчен тата хамӑрӑн килсене таврӑнасси ҫинчен калаҫма та чараҫҫӗ».

Нимӗҫсен ҫав дивизийӗнчех 516-мӗш пехотнӑй полкӑн 5-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ салтак Вальтер Клюге ҫапла каласа панӑ: «Пирӗн ротӑри салтаксем пурте пекех ватӑ, ҫурма сывмар ҫынсем. Пирӗн вӑрҫӑра мар пулмалла, лазаретра выртмалла. Пире темшӗн питӗ янӑравлӑ сӑмахпа — «резервистсем» тесе чӗнеҫҫӗ».

Хӗрлӗ воинсем тӑшмансене вӑйлӑрах та вӑйлӑрах хӗссе пыраҫҫӗ. Вӗсем, тӑван Донбаса оккупантсенчен тасатса, чарӑна пӗлмесӗрех тӑшмана хӗвеланӑҫ еннелле хӑвалаҫҫӗ.

А. АНОХИН, Д. АКУЛЬШИН.
(«Правда» хаҫатӑн спецвоенкорӗсем)

Наступленири кулленхи ӗҫсем

Сорокин юлташ командир пулса ертсе пыракан разведчиксен ротин ответлӑ операци тума хатӗрленнӗ. Чи юлашки самантра командир патне красноармеецсен шинельне тӑхӑннӑ пӗчӗк пӳҫиллӗ хӗр пынӑ. Вӑл ҫарҫынни пекех япӑт тӑсӑлса тӑнӑ та аллине козырек патне тытса, рапорт панӑ:

— Чаҫӑн санинструкторӗ Мария Андреева доклад тӑвать. Сирӗн ротӑпа пӗрле тыма ирӗк пама ыйтатӑп.

Хӗрӗн хӗрлӗ, ачанни евӗрлех пит-куҫӗ ҫине пӑхнӑ та командир, кӑшт иккӗленсе тӑнӑ. Чаҫӑн тӑшмансем тӑракан вырӑна ҫапӑҫса ҫӗмӗрсе кӗмелле, атакӑсем тумалла, нимӗҫсене тылра пырса ҫапмалла пулнӑ. Ҫак ӗҫре санинструктор чӑрмав пулмӗ-ши? Ҫитменнине тата ҫамрӑк хӗре хӑрушӑ операцие илсе кайма юрӗ-ши? Маруся командир иккӗленнине унӑн пит-куҫӗ тӑрӑхах чухласа илнӗ те, ача пекех хуйса ӗнентерсе каланӑ:

— Чӑнах калатӑп, эпӗ сире кансӗрлеместӗп. Ну, тархасшӑн!—тенӗ.

[illegible]

шала кӗрсе кайнӑ та боевой йӗркене йышӑнса хатӗрленсе тӑнӑ. Шуҫӑм килсен, шуппалнӑ пӗлӗт ҫине симӗсрех тӗслӗ сигнал ракети, ирхи ҫӑлтӑр пек, ҫӳле вӗҫсе хӑпарнӑ та сӳнсе ларнӑ. «Ура!» кӑшкӑрни янӑраса кайнӑ. Боецсем атакӑна кӗрсе кайнӑ. Ҫурӑлса каякан минӑсен сасси артиллери канонадин шавӗпе хутшӑнса пӗр пысӑк шав тулса янӑраса тӑнӑ.

Аманнӑ боец тӑшӗрӗлсе аннине курсан, санитари сумкине ҫакса янӑ хӗр ун патне чупса пынӑ та, боецӑн суранне ҫыхса, ӑна хӑйӗн хулпуҫҫийӗ ҫине хӑпартса хунӑ. Мӗнпур вӑйне пухса ҫӗкленӗ пирки вӑл енчен енне сулкаланса пынӑ. Аманнӑ боеца тарӑн вар тӗпне антарса хунӑ. Ҫапла вӑл ҫапӑҫу вучӗ ӑшӗнчен пилӗк боеца йӑтса илсе тухнӑ. Улттӑмӗшне йывӑр амантнӑ пулнӑ, кӑшт хыттӑнрах тыткалани те ӑна питӗ ыраттарнӑ. Хӗр хӑйӗн шинельне хывса ун ҫине боеца хунӑ та, ӑна тӑшмансем персе тӑракан хӑрушӑ вырӑн урлӑ питӗ асӑрханса туртса кайнӑ.

[illegible]

Калинин фрончӗ. Б. ПОЛЕВОЙ.

Фашистсене ҫӗмӗрни

КАЛИНИН ФРОНЧӖ, февралӗн 1-мӗш. (ТАСС специал). [illegible]

К. [illegible]

Ҫак [illegible]

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Сывлӑшри ҫапӑҫура

[illegible]

ровщик ҫиле тапӑнма хатӗрленнӗ пулмалла, анчах Локтионов унӑн ҫулне пӳлсе татрӗ. Фашистсен летчикӗ аякки-нелле пӑрӑнса тарма тытӑннӑ вӑхӑтра, тӗл персе янӑ пулемет черечӗ ӑна часах пырса тиврӗ, самолет тӗтӗмпе хупланса ҫӗрелле ыткӑнчӗ. Акӑ бомбардировщиксем кирлӗ тӗле ҫитсен, сывлӑшри ҫапӑҫу татах вӑйланчӗ. Фашистсен зениткисем самолетсем ҫинелле пеме пуҫларӗҫ. Ҫапах та пирӗн самолетсене пӗрне те сиенлеймерӗҫ. Пӗр фашист пирӗн бомбардировщик хыҫне тухнине курсан, летчик Карданов пулеметран персе фашистсен самолетне ҫӗр ҫинелле тӑрӑнтарчӗ. Ҫавӑн пекех Максименко та пӗр самолета ҫӗр ҫумне лаптӑтса лартрӗ. Задание пурнӑҫланӑ хыҫҫӑн пирӗн самолетсем каялла ҫул тытрӗҫ. Ку ҫапӑҫура вӑйсем пӗрех пулнӑ пулин те, тӑшман 7 самолетран 3-шне ҫухатса пӑрахса тарчӗ. Совет Союзӗн Геройӗ Локтионов, орденоносецсем Кардановпа Максименко летчиксем хӑйсен шиксӗрлӗхӗпе пысӑк пултарулӑхне кӑтартрӗҫ.

Кӑнтӑр фрончӗ. В. УРУКОВ.

Гитлерла терропа выҫлӑх режимӗ Балканра

Греци халӑхӗн асапӗ

СТАМБУЛ, февралӗн 2-мӗш. (ТАСС). [illegible]

дитсен аллине параҫҫӗ. Ҫӗрле оккупантсем иртен-ҫӳренсене тытса чараҫҫӗ те ҫаратаҫҫӗ. Ҫакнашкал ӗҫсемшӗн жалоба паракансене оккупантсем коммунистсем майлӑ ӗҫлеҫҫӗ тесе айӑплаҫа, концентрациллӗ лагерьсене хупса лартаҫҫӗ. Салоникире уйрӑмах Германин 135-мӗш пехотнӑй полкӗ, ӗлӗк каторгӑра пулнӑ ҫынсенчен, вӑрӑ-хурахсенчен пухнӑскер, тискерле ӗҫсем тунӑ. Ҫав полка Югославири партизансен движенине пусарма янӑ пулнӑ. Анчах та Сербири партизансем полк пыракан поезда сирпӗнтерсе янӑ та, ҫапла вара вӑл «паттӑрла» ӗҫсем тӑвассине пӗтерсе лартнӑ.

Фракире питӗ пӗчӗк айӑпшӑнах, е нимӗн айӑпсӑр-мӗнсӗрех Болгари полицийӗсем халӑха тытса хупаҫҫӗ те Болгарие ӗҫ батальонӗсене ӑсатаҫҫӗ.

Нумаях та пулмасть пӗр ял патӗнче нимӗҫсен парашютисчӗсен виллисене тупнӑ. Ҫакӑншӑн нимӗҫсем ҫав ял ҫыннисене питӗ тискерле асаплантарнӑ.

Афины хулинче питӗ нумай ҫынсене арестленӗ. Тӗрмесенче мӗнле те пулин сӑлтав пирки лараканисем хушшинче социальнӑй положени тӗлӗшӗнчен тӗрлӗрен ҫынсем те пур.

Сведенисем ҫакна кӑтартса параҫҫӗ: Греци халӑхӗ выҫӑпа аптӑрать, тӗрлӗрен ҫитменлӗхсене тӳсет пулин те тата оккупациллӗ влаҫсем унран пур майсемпе те мӑшкӑллаҫҫӗ пулин те, халӑх шухӑш-кӑмӑл тӗлӗшӗнчен пусӑрӑнса ларман, пачах урӑхла, халӑхӑн хӑйне ирӗке кӑларасшӑн пыракан кӗрешӗвӗ вӑйланнӑҫемӗн вӑйланса пырать.

Болгария гитлеризмӑн пусмӑрӗ айӗнче

СТАМБУЛ, январӗн 31-мӗш. (ТАСС). [illegible]

правительствин, тӗнел держависене килӗшме темӗн пекех тӑрӑшсан та, Румынирен те ҫакӑн пек ӳпкелешнинех илтме тивет. Болгария вӑрҫа тӳрех хутшӑнмасть пулин те, хӑйӗн территорине, ҫав шутрах Румыни территорийӗ шучӗпе те, «пысӑклатни ҫинчен Румыния Берлинра темиҫе хутчен те каласа панӑ.

Хальхи вӑхӑтра Болгари войскисем, нимӗҫсем ыйтнӑ тӑрӑх, Сербие оккупацилеҫҫӗ. Ҫав мероприяти ӗнтӗ нимӗҫсен войскисен пӗр пайне Сербирен илсе тухма май парать. Анчах та Сербие оккупацилессине Болгарири халӑх та, салтаксем те кӑмӑлламаҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсем гитлеровецсене кирек епле славян халӑхне те пусмӑрлама пулӑшасшӑн мар.

Болгарири чӑн-чӑн лару-тӑрӑва Болгари премьер-министрӗ Филов январӗн 21-мӗшӗнче тухса каланӑ хӑйӗн сӑмахӗнче питӗ лайӑх кӑтартса панӑ. Ун чухне вӑл ҫапла каланӑ: «Паянхи пысӑк задача икӗ пайран тӑрать,—кунта сӑмах ҫӑкӑр ҫинчен тата нации пурнӑҫӗ ҫинчен пырать», тенӗ. Чӑнах та ӗнтӗ, продовольстви запасӗсене нимӗҫсем Германие илсе тухса кайни, ҫӗршывра нимӗҫсем нимӗн чарусӑр хуҫаланни, репрессисем вӑйлӑланнӑҫемӗн вӑйлӑланса пыни «нацин шухӑш-кӑмӑлне» ытларах та ытларах Гитлера хирӗҫле, правительствӑна хирӗҫле туса пырать. Хуласенче час-часах нимӗҫсене хӑваласа яма, фашизма хирӗҫ, вӑрҫа хирӗҫ, ҫӑкӑршӑн тата миршӗн кӗрешме чӗнекен листовкӑсем сапаласа пӑрахаҫҫӗ.

Тарӑхулӑх вӑйлӑланса пынине хирӗҫ правительство тӗрлӗрен репрессисемпе тавӑрса пырать. Январь уйӑхӗнче правительство обществӑллӑ 20 организацие, уҫҫӑн ӗҫлекен организацисем вӑрҫа хирӗҫ шухӑш-кӑмӑлсем сараҫҫӗ тесе, салатса ярасси ҫинчен распоряжени кӑларнӑ. Ҫав шутрах тӗн организацийӗсене те салатса янӑ. Болгарири хаҫатсем, кашни кун тенӗ пекех, «государство ҫирӗплӗхне хирӗҫле» ӗҫсем тукӑшӑн, ҫавнашкалах калаҫнӑшӑн та военно-полевой судсем ҫакса вӗлермелле приговорсем йышӑнни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. Ҫакса вӗлермелли приговор йышӑнассине Болгарире нимӗҫсен вӗсем оккупациленӗ ҫӗршывсенче усӑ куракан практикинчен илнӗ. Ҫӗршывра террор хуҫаланать пулин те, нимӗҫсен войскисем тӑраҫҫӗ пулин те тата гестапо агенчӗсем ӗҫлеҫҫӗ пулин те, пур ҫӗрте те халӑх хӑйӗн тарӑхуллӑ шухӑш-кӑмӑлӗсене, правительствӑн мероприятийӗсене хирӗҫ саботаж тунине кӑтартса парать. Болгарири хаҫатсенче час-часах Болгари халӑхне е Болгари интеллигенцине «боевой шухӑш-кӑмӑл ҫуккишӗн» тата «ҫӗнӗ йӗркене» шанманшӑн айӑплакан статьясем пичетленсе тухаҫҫӗ.

Продовольстви тӗлӗшпе те Болгарири лару-тӑру япӑхланнӑҫемӗн япӑхланса пырать. Январӗн 28-мӗшӗнчен пуҫласа эрнере ҫӑкӑрсӑр пӗр кун тунӑ. София хулинче ҫӑкӑра улӑштармалли ҫӗнӗ майсем тупас тӗлӗшпе, нимӗҫ специалисчӗсем хутшӑннипе, уйрӑм комисси ӗҫлет. Ялсенчен тырпула илсе кайса пӗтернисӗр пуҫне, юлашки вӑхӑтра тата хулари мӗнпур халӑхӑн продовольстви запасне те тӗрӗслесе конфискацилеме тытӑннӑ. Хулари халӑха топливо пама чарӑннӑ, мӗншӗн тесен ҫӗршыври топливо запасӗсене пӗтӗмпе тенӗ пекех Италие илсе кайнӑ.

Кунсӑр пуҫне тӗрлӗ ерекен чирсем сарӑлаҫҫӗ, тифпа чирлекенсем те часчасах тӗл пулаҫҫӗ.

Гитлер хатӗрлесе панӑ шпаргалка тӑрӑх Болгарири хаҫатсем «аслӑ Болгари» ҫинчен, «ҫӗнӗ йӗрке тӑвас тӗлӗшпе Болгарин мухтавлӑ тивӗҫӗ» ҫинчен ҫӳпӗлтетни ҫак условисенче халӑха ҫилентерсе тарӑхтарать кӑна.

Нимӗҫсем оккупациленӗ Эстони ССР-чи халӑх нуша курни

СТОКГОЛЬМ, январӗн 31-мӗш. (ТАСС). Финсен хаҫачӗсем те нимӗҫсем вӑхӑтлӑха оккупациленӗ Эстони ССР-чи халӑх пысӑк нуша тӳсни ҫинчен ҫырмасӑр тӑма пултараймаҫҫӗ. «Ууси Суоми» ятлӑ хаҫат ҫапла ҫырать: Таллин хулинче топливо пачах ҫук. Хулари магазинсенчен 90 процентӗ хупӑннӑ, мӗншӗн тесен нимӗнле тавар та, нимӗнле продуктсем те ҫук. Карандаш тупса илес пулсан та, вӑрӑм черетре тӑма лекет, тесе ҫырать хаҫат. Хулара спекуляци вӑйланса кайнӑ. Турттаракан состав ҫуккипе Эстонире транспорт ҫӳресси пачах чарӑнса ларнӑ. Таллин хулинче вӑрҫӑ положенийӗ туса хунӑ. Каҫ пулсан халӑх урама тухма пултараймасть.

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен ҫар хӑвачӗ вӑйланни

Америкӑн Лондонри посолӗ тухса калани

ЛОНДОН, январӗн 31-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Лондонра Америкӑн Англири посолӗ Вайнант сӑмах тухса каланӑ. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл ҫапла каланӑ: Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем ҫак вӑрҫа кӗриччен иртнӗ вӑрҫӑ умӗнхиччен нумай вӑйлӑрах хатӗрленсе ҫитнӗ. Регулярнӑй ҫар та, тинӗс-ҫар флочӗ те вӑрҫа хутшӑниччен нумай вӑхӑт хушши ӳсе пычӗҫ, унта кирлӗ чухлӗ йыша ӗнтӗ пӗтӗмпех илсе ҫитернӗ. Юлашки 20 ҫул хушшинче нациллӗ гварди регулярнӑй ҫар прависемпе усӑ курса ӗҫлет. Ҫар повинноҫне пурнӑҫа кӗртни ҫулталӑк ҫурӑ ҫитрӗ ӗнтӗ, ҫапла вара Америкӑн халӗ регулярнӑй ҫар пур. Халӗ Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен иртнӗ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчех хатӗрленӗ, кайран чипер упраса усранӑ офицерсен пысӑк кадрӗсем пур. 140 миллион халӑх пур ҫинче, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем 7 миллионлӑ ҫар организацилеме шутлаҫҫӗ. Вайнант хӑйӗн сӑмахӗнче ҫакна та паллӑ туса хӑварнӑ: Лӑпкӑ океан ҫинче пуҫ пулса тӑнине Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем каялла ҫӗнтерсе илме пултараҫҫӗ, мӗншӗн тесен США-н тинӗс-ҫар флочӗн вӑрҫӑра кирлӗ пахалӑхӗсем пит те вӑйлӑ, ӑна Макассар проливӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусем те лайӑх кӑтартса пачӗҫ, тенӗ.

Лӑпкӑ океан ҫинчи вӑрҫӑ

АМЕРИКА ПӖЛТЕРӖВӖСЕМ

НЬЮ-ИОРК, февралӗн 2-мӗш. (ТАСС). Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен тинӗс министерствин коммюникинче ҫапла каланӑ: Лӑпкӑ океанӑн вӑтаҫӗр пайӗнче Америка флочӗ Японин Маршаль утравӗсемпе Джильберт утравӗсем ҫинчи тинӗс базисемпе авиаци базисем ҫине кӗтмен ҫӗртен пырса тапӑннӑ. Пӗр вӑхӑтрах тинӗс ҫинчен те, сывлӑшран та атакӑланӑ. Японин пысӑк мар суднисене нумай путарнӑ е сиенленӗ. Сывлӑшран тата тинӗс ҫинчен бомбардировка туса, ҫыранри сооруженисене ҫӗмӗрнӗ. Ҫӗр ҫинче тата сывлӑшра Японин нумай самолечӗсене пӗтерсе тӑкнӑ.

США-н ҫар министерствин коммюникинче ҫапла пӗлтернӗ: Филиппинра Япони войскисем Батаан ҫурутравӗнче (Лусон утравӗ) Америкӑпа Филиппин войскисен позицийӗсене темиҫе хутчен те вӑйлӑн атакӑланӑ. Ҫапӑҫусем питӗ хаяррӑн пулса пыраҫҫӗ, анчах та Америка войскисем хӑйсен позицийӗсене хӑйсен аллинче ҫирӗп тытса тӑраҫҫӗ. Противникӑн ҫухатусем чылай пысӑк.

АНГЛИ ПӖЛТЕРӖВӖСЕМ

ЛОНДОН, февралӗн 2-мӗш. (ТАСС) Англин Сингапурти командованийӗн коммюникинче ҫапла каланӑ: ӗнер Англи артиллерийӗ Джохор Бару районӗнче Японин пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫакан чаҫӗсем ҫине вӑйлӑн персе тӑнӑ. Японин пысӑках мар виҫӗ судни хӑшпӗр тӗлте Сингапурӑн ҫыранхӗрри ҫине тупӑсенчен пенӗ. Пӗр суднӑна путарнӑ.

Англин Рангунри командованийӗн коммюникинче: Англи войскисем Моулмейн районӗнчен тухса кайнӑ хыҫҫӑн фронтра лару-тӑру улшӑнмасӑр тӑрать, тесе кӑтартса панӑ.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙӖН ПӖЛТЕРӖВӖСЕМ

НЬЮ-ИОРК, февралӗн 2-мӗш. (ТАСС). Голланди Инди командованийӗн коммюникинче: Япони десанчӗсем анса ларнӑ районсенче пурнӑҫ те ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ, тесе пӗлтернӗ.

ЯПОНИ ПӖЛТЕРӖВӖСЕМ

ТОКИО, февралӗн 2-мӗш. (ТАСС). Официальнӑй хыпарсем тӑрӑх, январӗн 31-мӗшӗнче Япони авиацийӗ Банка патӗнче (Суматра утравӗн хӗвелтухӑҫ ҫыранӗ) союзниксен суднисен караванне атакӑланӑ. Ҫак кунах Япони авиацийӗ Сингапур ҫине пырса тапӑннӑ. Февралӗн 1-мӗшӗнче ирхине ирех Америка флочӗ Маршаль утравӗсем патне пырса тухнӑ. Ӑна унта Япони карапӗсем пырса атакӑланӑ, атакӑна пула противникӑн пӗр крейсерӗ ҫиче пушар тухнӑ. Япони карапӗсем пӑртак сиенленнӗ. Январӗн 31-мӗшӗнче тул ҫутӑлас умӗн Амбоина утравӗ ҫине (Молукк утравӗсем) десант антарнӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Лозовая хулишӗн ҫапӑҫни

[illegible]

те. Чи малта пыракан подразделени чугунҫул станцине кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ енчен ҫавӑрса илме, противник чакмалли ҫула татса пӳлсе хума, унтан ҫурма ункӑн хӗссе пырса, вокзал патне тухма задани илет.

Пӗрремӗш батальонӑн противника хӗвелтухӑҫ енчен хупӑрласа илмелле тата икӗ батальонӑн станцине ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ енчен ҫавӑрса илсе кӗрсе каймалла. Урамсенче питӗ хаяр ҫапӑҫусем пуҫланаҫҫӗ, нимӗҫсем вӑйлӑн хирӗҫ тӑраҫҫӗ. Вӗсем пӳрт тӑррисене, ҫурт кӗтессисене, подвалсене, хапхасем хыҫне пытана-пытана ларнӑ, урнӑ пек вут-хӗм тӑкаҫҫӗ.

Кашни тӑкӑрлӑка, кашни ҫурта ҫапӑҫса туртса илме тивет. Пӗтӗм вӑйсене тӗплӗн тӗрӗслесе тухнӑ хыҫҫӑн пирӗн боецсем станци ҫывӑхӗнчи поселокӑн ҫурчӗсене тата урамне туртса илнӗ, вӗсем йӗркеллӗн те хытӑ тӑрса тӑшмана станци варринелле хӗссе пынӑ. Нимӗҫсем пирӗн подразделенисем пырса ҫапнине тӳссе тӑраймаҫҫӗ. Пӳрт хыҫҫӑн тепӗр пӳрт, хӑйсен салтакӗсен виллисемпе пӗрле ҫар хатӗрӗсене пӑрахса хӑварса, тӑшман станци патне чакса пынӑ. Унта вӑл пулӑшу — румынсен дивизийӗ пырса ҫитиччен тытӑнса тӑма шутланӑ. Анчах шухӑшланӑ ахалех пулнӑ.

Ҫурма ункӑн ҫавӑрса илнӗ пирӗн ҫар чаҫӗсем вокзал патне ҫывӑхран ҫывӑха куҫса хӗссе пыраҫҫӗ. Тӑшман темиҫе пая пайланса, темиҫе вырӑнта ҫирӗпленсе ларса кӗрешме пӑхрӗ. Вӗҫӗ-хӗррисӗр вӑйлӑн вут-хӗм тӑкса, вӑл пирӗн малалла пыракан ҫар чаҫӗсене пӳлсе хурасшӑн. Пирӗн боецсем ҫав оборона пункчӗсене шыраса тупса, вӗсене хӑвӑрттӑн атакӑласа пӗрерӗн-пӗрерӗн аркатса тӑкнӑ, пӗрмаях малалла кайса пынӑ. Каҫалапа, хӑйӗн положенийӗ шанчӑксӑррине кура, тӑшман станцине хӑварса, хӗвеланӑҫ еннелле ним йӗркесӗр тарма тытӑнать. Ҫак вӑхӑталла тӑшман кӗтнӗ пулӑшу та пырса ҫитет, анчах ӗнтӗ вӑл нимӗн те тӑваймасть. Пулӑшма пынӑ румынсем нимӗҫсемпе пӗрлех каялла тараҫҫӗ.

Лозоваяшӑн ҫапӑҫнӑ чухне нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 600 ҫынна вӗлернӗ. Малтанлӑха шута илнӗ туллимар сведенисем тӑрӑх, ҫакӑн чухлӗ трофея туртса илнӗ: 3.000 автомашина, тӗрлӗ калибрлӑ 21 тупӑ, 50 миномет, 100 пулемет, 500 винтовка, ҫар хуҫалӑхӗн пурлӑхне тиенӗ 18 эшелон, ҫар апат-ҫимӗҫӗ тата тӗрлӗ хатӗрсем хунӑ 10 склад, мотоциклсем, чылай обозсем, лашасем туртса илнӗ.

Полковник Е. ПОЛОЗОВ.
(«Правда», январӗн 30-мӗш).

Чебоксарскому тресту столовых и ресторанов требуются:

Бухгалтер-ревизор предприятий города.
Инженер-технолог, знакомый с работой общественного питания.
Старший бухгалтер столовой.
Инструктор-кулинар.
Повара разных категорий.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 11, первый этаж.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 6—67, редактор заместителӗн — 3—97, редакци секретарӗн — 4—46, пропаганда пайӗн — 4—97, парти пурнӑҫ пайӗн — 7—97, экономика пайӗн — 6—88, ҫыруҫсемпе рабселькорсен пайӗн — 2—30, «Ҫӗкӗрӑмӗ» журналӗн — 6—23, «Ленин ҫулӗпе» журналӗн — 6—85, издательство конторин — 6—23.

НТ 37 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 260. Ф. 6. 53_84 п. л.